

Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ

# ЭП ИЛТЕТĔП ЯЛАН ХУСАНКАЙ САССИНЕ

## ПЕТĔР ХУСАНКАЙ УМĔНЧЕ ПУҪĂМА ТАЙСА

I

**Ҫамрăклах хисеплеттĕм сана,**
**Асилмешкĕн кирлех-ши ăна,**
**Аван мар пек кусран калама —**
**Ҫунат патăн эс ман чунăма.**

II

**Ĕмĕрсен ĕмĕтне**
**Пурнăҫа эс кĕртен.**
**Эсĕ сывă чухне**
**Вăйли ҫуккă пиртен.**

1960

## ХУСАНКАЙПА ПĔРЛЕ ЧУХНЕ

**Ҫӳренĕ, кайнă ялсене**
**Хусанкайпа пĕрле чухне.**

**Ялан асра ун сăввисем,**
**Асрах илемлĕ юррисем.**

**Манас ҫуках эп ĕмĕрне**
**Тăван поэзин улăпне.**

1987

## ЭП ИЛТЕТĔП...

**Эп илтетĕп ялан Хусанкай сассине,**
**Пурнăҫа чĕререн юратма чĕннине.**

**Эп илтетĕп ҫаплах Хусанкай сассине,**
**Халăха ĕҫпеле пулăшма чĕннине.**

**Эп илтетĕп ялан Хусанкай сассине,**
**Вăл тăван чĕлхене пуҫ тайма чĕннине.**

**Эп илтетĕп ҫаплах Хусанкай сассине,**
**Ҫирĕп миршĕн хастар кĕрешме чĕннине.**

**Эп илтетĕп ялан Хусанкай сассине,**
**Çĕршыва чун–вартан юратма чĕннине!**

1987

## ТĂВАН ПОЭТĂМĂР ХУСАНКАЙ

**Хусанкай хăйĕн пĕтĕм вăйне,**
**Çăлтăр пек çуталан ăс–халне,**
**Пархатарлă хĕрӳ пурнăçне**
**Парнелерĕ Чăваш халăхне.**

**Хусанкай тăван халăх ятне,**
**Илĕртӳллĕ чĕлхе илемне,**
**Ун сăваплă сӳнми хăватне**
**Илсе тухрĕ тĕнчемĕр умне.**

**Хусанкай пиллесе хăварни,**
**Унăн хаклă асамлă парни**
**Нихăçан тухас çук асăмран —**
**Тавах уншăн ăна чун–вартан!**

**Хусанкай чунĕпе, ăсĕпе,**
**Янăравлă сăвви–юррипе**
**Юлчĕ пирĕн пин–пин чĕрере,**
**Юлчĕ пирĕн асра ĕмĕре!**

1987



*Петĕр Хусанкай (сулахайран виççĕмĕшĕ) чăваш çыравçисемпе Шуршăл ялне кайсан. 1962 ç.*
*К. ПРОКОПЬЕВ сăнӳкерчĕкĕ.*